## Çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе пурне те саламлатпăр! Сирĕн сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр!

ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

52 (4466) №, 2015, декабрь /раштав/, 24
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.




Василий КЕРВЕН

## Çĕнĕ çул уявĕ

Çитмĕл çичĕ çутă çăлтăр
Килчĕ тейĕн хулана,
Чăрăш çиçрĕ йăлтăр-йăлтăр:
Илĕртсе пур ачана.

Çепĕç юрă, çăмăл ташă
Иксĕлмест шкулта паян.
Аллуна парсам, юлташăм,
Туслăхпа эпир пуян.

Ушкăнпа тăрса тухатпăр,
Кулăпа тулать тавра.
Кашниех тумланнă капăр
Çак илемлĕ уявра.

Хĕл Мучин хĕрӳ саламĕ
Ăшăтать чун-чĕрене.
Кам-ши халĕ кăмăлламĕ
Чиперкке Юр Пикене?

Вĕренме кашни пултарнă,
Ĕç те тунă темĕн чул.
Çавăнпа та пит ытарлă
Пирĕн кĕтнĕ Çĕнĕ çул.





## Хисеплĕ вулакансем!

"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсĕне раштавăн **24-25**-мĕшĕсенче çырăнса илме васкăр!

**"ХЫПАР"** – 625,62 тенкĕ.
**"ХЫПАР эрнекун"** – 325,92 тенкĕ.
**"ТАНТĂШ" хаçат** – 266,70 тенкĕ.
**"ТЕТТЕ" журнал** – 148,98 тенкĕ.
**"САМАНТ" журнал** – 187,26 тенкĕ.



Тин кăна Сурăх /Качака/ çулталăкне кĕтсе илнĕччĕ… Сисмерĕмĕр те, унпа сывпуллашма вăхăт çитсе пырать. Акă Упăте те йывăç тураттисенчен çаклана-çаклана пирĕн пата хаваслă кăмăл туйăмпа сиккелесе килет.

Упăте… Тĕлĕнмелле чĕрчун вăл. Лара-тăра пĕлменскер, шавлăскер, ялан мĕн те пулин туса тĕрлĕ путишсемпе «савăн-тараканскер»… Мĕн илсе килет-ши вăл çитес вун икĕ уйăхра? Пурăнăпăр та курăпăр.

Сурăх /Качака/ çулĕ вĕçленнĕ май эпир пурте вăл мĕнле туйăмсем, çĕнĕлĕхсем парнеленине аса илетпĕр, çапла-и? Пĕрисем кăçал пуçласа «Тантăшпа» е «Тетте» тата «Самант» журналсемпе туслашнă, теприсем республика кăларăмĕнче пĕрремĕш хут пичетленнĕ те вĕсен хавхаланăвĕ ӳссех кайнă… 2015 çулта ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнисем мĕн тери хĕпĕртенĕччĕ тата! Хастар та пултаруллăскерсемпе сире те паллаштартăмăр, хаклă вулаканăмăрсем. Шухăшласа пăхсан, ку çулталăк пире асра юлмалли самант чылай парнеленĕ. Çакă Упăте çулне хаваслă кăмăл-туйăмпа, ырă шанăçпа кĕтсе илме хистет.

Ырă йăлапа эпир хальхинче те хамăрăн хастар авторсене палăртас терĕмĕр. Акă вĕсем!

**Юлия ВАСИЛЬЕВА** /Патăрьел районĕ, Çĕньял шкулĕ/;
**Татьяна ЮРМИНА** /Патăрьел районĕ, Нăрваш Шăхаль шкулĕ/;
**Анастасия ТИМОФЕЕВА** /Куславкка районĕ, Энтри Пасар шкулĕ/;
**Екатерина ПЕТРОВА** /Шупашкар районĕ, Ишек шкулĕ/.

Лауреатсене ăшшăн саламлатпăр. Çулталăк вĕçĕнчи чыславра хăйсен ятне те курма ĕмĕтленекенсене малашне хастартарах пулма сунатпăр!

Сире ырă сунса

***«Тантăш» хаçатпа «Тетте» журналсен редакторĕ Владимир ФЕДОРОВ, «Самант» журнал редакторĕ Владимир СТЕПАНОВ, наборпа калăплав операторĕ Надежда ПЕТРОВА тата Луиза ВАСИЛЬЕВА, Нина ЦАРЫГИНА, Лариса ПЕТРОВА корреспондентсем.***



# УПĂТЕ алăкран шаккать



Сурăх çулталăкĕ пирĕнпе сывпуллашиччен нумай та юлмарĕ. Кĕçех Вутлă Упăте çулталăкĕ хуçаланма пуçлĕ.

Хăнăхнă йăлапа кашни Çĕнĕ çула фейерверкпа, хаваслă кăмăлпа кĕтсе илетпĕр. Унсăр пуçне çитес çулталăк хуçин кăмăлне тивĕçтерме тутлă апат-çимĕçпе парнесем хатĕрлемелле, кил-çурта илемлетмелле, уяв тумтирĕ туянмалла.

Упăте çулталăкне мĕнле кĕтсе илсен лайăхрахши? Чи малтан çак чĕрчун пирки кăшт каласа хăварар. Çитес çул хуçи ăслă, кăмăл-туйăма палăртма юратакан, вылянчăк, нумай пĕлме кăмăллаканскер. Тепĕр чухне унран мĕн кĕтсе илессине те пĕлейместĕн. Пуян чун вĕçевĕпе, пĕр вăхăтрах темиçе япалапа кăсăкланнипе те палăрать вăл. Упăтен пур пулăм хыпарĕсене пĕлмелле. Çавăнпа та çитес çул эпир пурне те пĕлсе тăрсан кирек мĕнле пуçару та ăнăçĕ.

Никамран та пулăшу кĕтмелле мар, пур ĕçе те хамăрăн çеç пурнăçламалла. Упăте хăй тĕллĕн, уйрăммăн, никама пăхăнмасăр пурăнма кăмăллать-çке. Çавăнпа пур ĕçе те вăхăтра пурнăçламалла. 2016 çул – çĕнĕ тĕллевсемпе шухăшсен ăнăçлă вăхăчĕ. Вутлă Упăте хăйĕнпе пĕрле чылай кĕтменлĕх, çĕнĕлĕх илсе килĕ. Кашниех Çĕнĕ çулта çĕнĕ пулăмсемпе пуянланĕ.

Ăна тивĕçлипех кĕтсе илес тесен пур вактĕвеке те тимлемелле. Кунта уяв сĕтелĕ питех те пĕлтерĕшлĕ.

## Уяв сĕтелĕ

Сĕтел çинче Упăте юратакан апат-çимĕç пулмаллах. Пылак çимĕçсем, мăйăр, пахчаçимĕç, улма-çырла нумайрах лартăр. Ешĕл çимĕçсем пирки те ан манăр. Упăте валли илемлĕ вазăпа таса шыв лартсан аван. Çавăн пекех тĕрлĕ морс, компот вырăнлă.

Уяв çимĕçĕсем ытларах вегетериан кухнинчен пулсан аван. Аш-какайран хатĕрленĕ апата ытлах кăмăлламасть Упăте. Çапах та кайăк-кĕшĕк е кролик какайĕнчен янтăланă блюдăсене лартма юрать. Чи кирли – апат-çимĕç ытлашши çуллă та йывăр ан пултăр.

Халиччен тутанса пăхман пĕр-пĕр хăйне евĕрлĕ блюдо хатĕрлесен те çитес çул хуçи кăмăллă юлĕ. Вăл çĕнĕлĕхе юратнине манмарăр пулĕ-ха. Хрусталь фужерсем, илемлĕ чашăк-тирĕк, хитре декор, хăйне евĕрлĕ те черчен шантал /посвечник/ ăшĕнчи çуртасем уяв кĕрекине уйрăмах пуянлатĕç.



## Çĕнĕ çул парни



Юлташсемпе тăвансене, çывăх çынсене Çĕнĕ çул парнипе савăнтарасси – ырă йăласенчен пĕри. Вутлă Упăте çулталăкĕнче парнене çак чĕрчун уйрăмлăхĕсене шута илсе хатĕрлемелле. Чи малтанах вăл çутă, куçа илĕртекен, хăйне евĕрлĕ япала пулмалла. Çав шутра – этника стилĕнчи сувенирсем, талисман тата ытти те. Пикесене вара çутă, хаклă чултан хатĕрленĕ капăрлăхпа савăнтарма пулать. Интереслĕ аксессуарсем те Упăтен кăмăлне тивĕçтерессех.

Хамăр алăпа ăсталанă парнерен пахараххи вара мĕн пултăр-ха? Çĕнĕ çулта çывăх çынсене çакăн пек парнепе савăнтарăр. Ăна чун вĕçевне ирĕке ярса хатĕрлĕр çеç.

## Кил-çурта капăрлатпăр



Пÿлĕмсене те Çĕнĕ çула кĕтсе илме капăрлатма ан манăр. Электричество гирлянди, хунар, тĕрлĕ тĕслĕ йăлтăркка мишура – пуринпе те усă курăр. Пĕчĕк, черчен саспа шăнкăртатакан шăнкăравсем çакăр. Алăк çийĕн вара упăте кÿлепине е ÿкерчĕкне вырнаçтарăр, вăл çитес çулта сире, хăнасене ăнăçу кÿрĕ.

Кил-çурта илемлетмелли теттесем вут тĕслĕ пулсан аван. Хĕрлĕ-сарă, сарă, ылтăн, хĕрлĕ тĕссем нумайрах пулччăр. Вĕсене кăштах кăвак тата симĕс тĕссемпе хутăштарма юрать.

Çĕнĕ çулпа çыхăннă тĕрлĕ япалапа декор пек усă курăр. Çурта, чăрăш турачĕпе йĕкелĕсем, упăте статуэтки, çемçе тетте – пĕтĕмпех юрăхлă. Çавăн пекех улма-çырла, мăйăр, канфет тултарнă карçинкка лартăр, ку çитес çул хуçине савăнтарĕ – тăраничен куччанеçпе сăйлантăр.

Чăрăш çине йăлтăркка, çутă теттесем, мишура нумайрах çакăр. Уйрăмах ăна йăлтăркка хутпа чĕркенĕ канфетпа, мандаринпа, хамăр алăпа ăсталанă теттепе илемлетсен аван. Чăрăш айне пысăк «упăте» тетте лартсан юрать. Пÿлĕмре чечексем пур пулсан вĕсене те капăрлатăр.

## Тумтир

2016 çула кĕтсе илме хĕрлĕ, сарă, хĕрлĕ-сарă тĕслĕ тумтир суйласан лайăхрах. Капăрлăхсем те çавăн тĕслĕ пулччăр. Ылтăн, кĕмĕл е йывăçран хатĕрленĕ мăй çакки, сулă, хăлха çакки те вырăнлă.

Уявра çĕкленÿллĕ кăмăл пулни пĕлтерĕшлĕ – ун чух Çĕнĕ çул хуçи чăнах та ăнăçу парнелĕ. Хăнасем валли тĕрлĕ хаваслă вăйă, пултарулăх конкурсĕсем хатĕрлеме тăрăшăр. Ăнлантăр пулĕ, Вутлă Упăте çулталăкне хаваслăн, шавлăн кĕтсе илмелле. Кичемлĕх валли вăхăт тупăнмалла мар уявра.



*Страницăна Нина ЦАРЫГИНА (56-11-80) хатĕрленĕ.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1146 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4950
Пичете раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Хастар хĕрача




**Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче Кармал ялĕнче кĕрешӳ енĕпе спортсменсем хатĕрлеме пуçланă. Чи малтанах кунта самбо, каярах ирĕклĕ майпа кĕрешесси аталанса пынă.**

Çак шкултан вĕренсе тухнисенчен халĕ чылайăшĕ Раççей спорт маçтăрĕ, спорт маçтăрĕн кандидачĕ пулса тăнă. Раççейри паллă спортсменсем те чылай çуралса ӳснĕ ку ялта. Вĕсенчен хальхи ӳсĕмри ачасем тĕслĕх илеççĕ. Ирĕклĕ майпа кĕрешесси вăй илсе пырать. Арçын ачасемпе пĕрле хĕрачасем те ăмăртмалла кĕрешеççĕ. Вĕсен çитĕнĕвĕ те пысăк шайра. Анчах та шел, Кармалти тулли мар вăтам шкула хупаççĕ. Ачасен малашне кӳршĕ яла ăс-тăн пухма, тренировкăна та пĕр сиктерми çӳреме тивет.

Тăрăшни – куç умĕнче. Пултаруллă ачасен çитĕнĕвĕпе тивĕçлипех мухтанма пулать. Вĕсенчен пĕри – Анастасия Лапшина. Вăл çиччĕмĕш класра вĕренет. Унра вăй вĕресе кăна тăрать. Пĕчĕкренех ирĕклĕ майпа кĕрешме юрататъ вăл, спортра – малтисен ретĕнче. Арçын ача е хĕрача – кĕрешӳре тиркемест. Унăн хушăран хăйĕнчен йывăртарах ачасемпе те кĕрешме тивет.

Авăн уйăхĕнче Атăлçи федераллă округĕнче иртнĕ ăмăртура вăл виççĕмĕш вырăна тухрĕ. Чӳк уйăхĕнче Рязань облаçĕн усă ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн Настя Раççей шайĕнчи ăмăртăва хатĕрленет. Елчĕк тăрăхĕнчи пĕр ăмăртуран та юлмасть вăл. Çамрăк кĕрешӳçĕ, çĕнтерӳçĕ пулнă май унăн Хисеп хучĕ, медаль, кубок шучĕ питĕ нумай. Физкультура вĕрентекен Иван Васильевич Егоровăн тӳпи те пысăк кунта. Вăл хăйĕн вĕренекенне кĕрешме хатĕрлет, вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарать, яланах хавхалантарать.

Эпир çитес кунсенче пулса иртекен ăмăртусенче те Настя çĕнтерессе шансах тăратпăр. Ăнăçу, телей сунатпăр. «Шаннă кайăк йăвара çук», – текен ваттисен сăмахне аяккалла сиретпĕр.

* * *

Пирĕн кайăк йăвара,
Вĕренет вăл тăрăшса.
Çĕнтерет ăмăртура
Шкул чысне мала хурса.
Ăнăçу, телей çумра
Пытăр юнашар чупса.
Эпир ялан хумханса
Вăй кӳретпĕр мухтаса.

## Кĕрешӳçĕ

Елчĕк тăрăхĕ пуян
Пултаруллă çынсемпе.
Кармалта пулар паян,
Паллашар çĕнтерӳçĕпе.

Настя хĕр кунта ӳсет,
Кашни кун шкула çӳрет.
Вĕренет вăл тăрăшса
Халĕ çиччĕмĕш класра.

Хĕрача пăхма черчен –
Кĕрешет çĕнтериччен.
Арçын ача, хĕрача –
Тиркев çук ун, хăй ача.

Ялан хатĕр вăй висме
Хыпар тусан кĕрешме.
Районта малти рете
Ак тухать çĕнтерӳпе.

Тĕрлĕ пысăк хулара
Вăл пулать ăмăртура.
Кур, пĕрремĕш вырăна
Кăмăллать Настя кăна.

Юратать пит кĕрешме,
Вăй виççессĕн çĕнтерме,
Чăваша хӳтĕлеме,
Çӳлтен çӳле çĕклеме.

*Светлана НИКОЛАЕВА.*

# Ыркăмăллăх çулĕпе

**Нумай пулмасть Раççей МЧСĕн ЧР тĕп тытăмĕн ĕçченĕсем Кӳкеçри интернат шкулта «Ыркăмăллăх çулĕпе» акци ирттерчĕç. Унта ытти çулсенчи пекех хăйсен ирĕкĕпе пушара хирĕç кĕрешекенсен регионти ушкăнĕ те хастар хутшăнчĕ.**




Мероприяти пуçламăшĕнчех ача-пăчапа çыхăннă массăллă ĕçсене йĕркелеме пулăшнă шкул ĕçченĕсене наградăларĕç. Альбина Васильева вĕрентӳпе воспитани ĕçĕсене пурнăçлакан директор çумĕ, рисовани вĕрентекен Ольга Мартьянова, кĕçĕн класс учителĕ Валентина Сорокина, Надежда Ефимова воспитатель, вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекен Людмила Григорьева тата математика вĕрентекенĕ Алина Творогова Тав хутне тивĕçрĕç.

МЧС ĕçченĕсем кĕçĕннисемпе хăрушсăрлăх урокĕ те ирттерчĕç. Вăл хавасла та вĕрентӳллĕ пулчĕ. Чăваш патшалăх Пукане театрĕн труппи лартнă «Бука» спектакль вара пурин кăмăлне те кайрĕ.

Ачасем шкулта ятарлă журнал та кăлараççĕ. Çĕнĕ номере вĕсем «Раççей МЧСĕ – 25 çул, пирĕн туслăх – 22» ятпа хатĕрленĕ. Ăна вĕсем сумлă хăнасене парнелерĕç. Журналăн кашни страницинче çамрăк корреспондентсемшĕн пожарнăйсемпе туслă пулни пĕлтерĕшли палăрать. «Йывăр ĕçе, ывăннине пăхмасăрах çăлавçăсем пире савăнăç кӳме те вăхăт тупаççĕ. Чылай çул ĕнтĕ эпир вĕсемпе тачă çыхăнура. Кашни уявра кĕтетпĕр», – пайларĕ шухăшне çиччĕмĕш класри Егор Полячихин. «Ӳссен эпĕ те çăлавçă пулатăпах. Çĕр çинчи пур чĕрĕ чуна, çынсене сыхлăп», – хушрĕ унăн тантăшĕ Иван Алексеев. «Пирĕн туссем, пожарнăйсем, тăтăшах кунта килсе çӳреççĕ. Вĕренӳ ирттереççĕ. Çавăнпа эпир инкекре мĕн тумаллине пĕлетпĕр», – терĕ саккăрмĕш класри Нина Андреева.

Шкул директорĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан Альбина Гладкова çăлавçăсемпе пожарнăйсене чĕререн тав турĕ.

Раççей МЧСĕн ЧР тĕп тытăмĕн шалти ĕçсен полковникĕ Герман Михайлов ачасене çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе саламларĕ. Çирĕп сывлăх, палăртнă тĕллевсене пурнăçа кĕртме, вĕренӳре ăнăçу сунчĕ.

Ача çуртĕнчи пепкесене тимлĕх уйăракансем «Планета» каферен пылак кучченеç пачĕç, пожарнăйсем шкула спорт инвентарĕпе чысларĕç.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

## Вĕлтĕр çеç вĕлтĕртетсе

Вĕлтĕр çеç вĕлтĕртетсе
Юр пĕрчи çĕре ӳкет,
Хура тĕслĕ çĕр питне
Шурă шупăрпа витет.

Шăп лараççĕ йывăçсем,
Хускалмаççĕ туратсем.
Вичкĕн çилĕ халь канать,
Лăпкă таврана сăнать.

Хĕл сиввийĕ кĕттермест:
Таврана капăрлатать,
Чӳречене эрешлет –
Хăйĕн вăйне кăтартать.

*Анна ВОРОБЬЕВА.*

Елчĕк районĕ,
Таяпа Энтри.



# Учитель – чăн асамçă!

Хăш чухне, никам кансĕрлемен чухне, пуçра час-часах сăвă йĕркисем çуралаççĕ. Хаваспах алла ручка тытса сĕтел хушшине вырнаçатăп. Паян вара Çĕнĕ çул умĕнхи кунсенче юратнă мăнукăн вĕрентекенĕ пирки асамлă йĕркесем шăранчĕç... Мăнукăм, Виолетта, Шупашкарти 6-мĕш шкулта вĕренет. Ăна эпĕ чун-чĕререн юрататăп-çке. Шкултан таврăнмассерен кун епле иртнине ыйтса пĕлетĕп, малашнехи тĕллевĕсемпе кăсăкланатăп. «Кукамай, манăн яланах шкула каяс килет. Мĕншĕнне те калама пултаратăп. Пирĕн класс питĕ туслă, пĕр çемьери пек пурăнатпăр. Ĕнтĕ уяв умĕн те авă пÿлĕме ушкăнпах хитрелетрĕмĕр. Ара, Хĕл Мучипе Юр Пике пирĕн класа кĕрсен савăк кăмăллă пулччăр терĕмĕр. Тата та кăмăлли – класс ертÿçи Валентина Васильевна Францева пуринпе те ăшшăн калаçни, пĕлÿ тĕнчинче кашни кун çĕнĕлĕх парнелени. Унран ăшăлăх тапса тăнине те пурте туятпăр, сисетпĕр. Çавăнпа вăл пирĕншĕн иккĕмĕш анне», – терĕ пĕр кунхине. Эй, мĕн тери хитре сăмахсем шăрантарчĕçке мăнукăм юратнă педагогĕ пирки. Хăпартлантăм. Чăн та, Виолетта тĕрĕссине калать. Ара, хам та час-часах мăнукăм патне шкула пырса çÿретĕп. Валентина Васильевна кашнинех ырă кăмăлпа, йăл кулăпа кĕтсе илни чуна савăнтарать. Ĕçĕ нумай унăн, апла пулин те пирĕнпе калаçма вăхăтне тупатех. Пысăк тав, Валентина Васильевнăна! Малашнехи пурнăçра ыррине çеç сунатăп.

* * *

Виççĕмĕш «г» ачисем
Сире чунтан юратаççĕ.
Киле васкас мар тесе
Сирĕн çумма йăпшăнаççĕ.

Вăтăррăн сирĕн çине
Куç илми пăхаççĕ.
Урок ăнлантарнине
Тимлĕн итлесе лараççĕ.

Шăнкăрав янăрасан –
Сĕтел патне чупаççĕ.
Тĕрлĕ ыйтусем парса
Сире «тапăнаççĕ».

Уроксем пуçланиччен –
Эсир килессе кĕтеççĕ.
Алăк урлă каçиччен
Вăрттăн сăнаса илеççĕ.

«Учитель килет!» – тесе
Класалла чупса кĕреççĕ.
Кăларса кĕнекесем
Урока хатĕрленеççĕ.

Эх, учитель лăш курмасть
Çĕрĕпе вăл куç хупмасть,
Тетрадь купи тĕрĕслет,
Йăнăшсене тÿрлетет.

Ирхине шкула утать,
Класĕ çинчен шухăшлать:
«Паян ăнăçлă ĕçлес,
Уроксене ирттерес».

Учитель – чăн асамçă!
Ялан вăл тем шырать:
Мĕн çĕннине шыравçă
Компьютерта пăхать.

Учителе юратсан,
Ача шкула юратать,
Ача шкула юратсан,
Ашшĕ-амăш савăнать.

Пĕрремĕш учитель –
Яланах асра...
Нумай çул иртсен те
Манас çук ăна!

*Юратса, хисеплесе –*
*Валентина Федоровна.*



## Унăн сăнне кăларăттăм хут çине...

Валентина Васильевна класĕнче пĕлÿ илнишĕн мĕн тери хĕпĕртетĕп. Вăл пире яланах пурнăçа юратмаллине, аслисен сăмахĕсенчен иртмелле маррине, кĕçĕннисене пулăшмаллине, вĕренÿре çитĕнÿсем тумаллине час-часах калать. Унăн ырă кăмăлĕ, савăк кулли мана кирек ăçта та хăпартлантарать.

Уроксем хыççăн ÿнер шкулне çÿретĕп. Шурă хут çине тем те куçаратпăр: çутçанталăка та, чĕрчунсене те. Тĕрлĕ конкурса та хутшăнма ĕлкĕртĕм, çĕнтерÿçĕсен йышĕнче те пултăм. Ăста та паллă художник пулас ĕмĕт канăç памасть-çке мана! Тăвансемпе паллакансем те хавхалантараççĕ çитменнине. Чăнах та, художник пулсан? Мĕн тери савăнăттăм. Ун чухне вара Валентина Васильевна сăнне те кăларăттăм шурă хут çине... Чуна тыткăнлакан портрета йăтса юратнă педагог патне чупăттăм... Манăн ĕçе курсан унăн савăнăçĕ виçесĕр пулĕччĕ.

Чăн-чăн художник пек «пиçсе» çитиччен нумай вĕренмеллине пĕлетĕп. Апла пулин те ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртессишĕн умри йывăрлăха парăнтарса çитетĕпех ун патне.

*Яна СОКОЛОВА.*

Шупашкар,
6-мĕш шкул.



## Панулмие кам юратмĕ?



Алеша Максимов Çĕнĕ çул уявне мĕн пĕчĕкрен кăмăллать. Эх, амăшĕпе сĕтел хатĕрлеме юрататчĕ вара. Çĕрулми шуратма, тĕрлĕ салат янтăлама ÿркенместчĕ ун пек чухне.

Кăçалхи праçнике те ытти çулсенчи пекех савăк кăмăлпа кĕтсе илесшĕн вĕсем.

– Анне, анне, кăçал пахчара панулмисем ăнса пулни мана савăнтарчĕ. Ăна хĕлле валли нÿхрепе те хутăмăр. Çав çимĕçе те уяв сĕтелĕ çине лартма манас марччĕ. Техĕмлĕ те сĕтеклĕскерсене уявра каллех çисе савăнар, – тет Етĕрне районĕнчи Тури Ачак шкулĕнчи 7-мĕш класра вĕренекен арçын ача хăпартланса та хавасланса.

Шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен амăшĕ Галина Владимировна ывăлĕпе килĕшсе пуçне сĕлтрĕ.

– Юрать, Алеша, эсĕ калана пек пултăр, – терĕ йăл кулса.

*Элиза ВАЛАНС.*

Етĕрне районĕ,
Тури Ачак.